**Кириллов, Т. К. (1880-1921). Чăваш халăх юрри**

## ЧĂВАШ ХАЛĂХ ЮРРИ

Пирĕн Аслă Атăл вăйлă
Шурă Атăлпа пĕрле.
Халăх та унта хăватлă
Пĕр ăспа пĕрлешнипе.

Хамăр чун юратнă çĕршĕн,
Ырă ятшăн тăрăшар;
Хамăр халăха çĕклесшĕн
Пĕр-пĕрне ăс-хал парар.

Эй, çынсем. Пурте тапранăр —
Тĕрĕс çул çине тухар.
Халăх хăватне хал парăр —
Пурнăçа ырăлатар.

Пурсăмăр пĕрле тан-харăс
Юнашар утса пырар,
Çынсерен пĕр çутă ĕмĕт
Тĕнчере чипер тытар.

Ырă кун-çулсем курасшăн
Çутă вăйлă ăс шырар,
Тĕттĕмрен çутта тухасшăн
Çутă çул уçса хурар.

Пĕр-пĕрин çине ан тăрăр,
Манăç пултăр çилленни,
Хирĕçес-вăрçас ĕç пĕттĕр —
Çураçтартăр юратни.

Хамăр çĕр çине ан ярăр
Аякри ют-тăшмана.
Халь тесен халь хатĕр тăрăр
Российăшăн пуç хума.

Халăх хушшинчен мухтавлă
Чăвашсем тухса тăрса
Тĕттĕм халăха çĕклеччĕр —
Тĕрĕс çул уçса парса.

Ырă кăмăлпа йăвашлăх
Ĕмĕр тăтăр чăвашра,
Тĕплĕ пурнăçпа пуянлăх
Хăватланччăр ял-йышра.

Халăх сывлăхпа тасалăх
Канлĕ куртăр çĕр çинче.

Тырă-пулă, çумăр, сывлăм
Савăнтартăр пурне те.

Чăвашсем. Пурте пĕрлешĕр —
Тĕрекленĕр тĕнчере,
Халăха çутта кăларăр
Ирĕклĕх хӳтлĕхĕнче.

Ирĕк праçникне тăватпăр
Чун юратнă халăхпа.
Çĕнĕ йĕркене саватпăр —
Çăмăл пултăр пурăнма.

*1917*

Кириллов, Тарас Кириллович (1880-1921). Суйласа илнисем : сăвăсем, поэмăсем / Тарас Кириллов ; Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ ; Г. Ф. Юмарт пухса хатĕрленĕ ; [ум сăмахне çыраканĕсем Г. Ф. Юмарт, И. Г. Трофимова]. - Шупашкар : ЧПГĂИ, 2010. – С. 58-60.